* * *

Нумай ҫĕре ҫитсе паратăп сасă,
Ҫыратăп, калаҫатăп вырăсла.
Сасартăк Атăл ҫилĕ касă-касă
Чуна килсе тивет те — пыр, ăсла!

Кăмăлăма вăл вăрăнса кĕрсессĕн,
Пыр, туп вара эс ун кутне-пуҫне!
Кўтсе ҫўрен, лара-тăра пĕлместĕн,
Чĕнми пулан, пăхмастăн ҫын ҫине...

Хистет ҫав ҫил: пĕр ўкĕтлет йăвашшăн,
Пĕр вăл лăскать, чуна хайăрттарса.
Умра кунҫулĕ тĕрленет чăвашăн —
Асаплă та ытараймн таса.

Вара эс парăмлă тесе шутлатăн
Иртнишĕн те, хальхишĕн те хăвна.
Ҫĕршыв ҫулне, тĕнче ҫулне хутлатăн
Пĕртен-пĕр ырă ĕмĕтпе кăна:

Тăван йăха тата кăшт хăпартасчĕ,
Ку тарана ҫитерне чĕлхене
Мĕнпур илемĕпе халь кăтартасчĕ,
Мĕнпур хăвачĕпе ҫак тĕнчене.

Хăҫан, ăҫта куҫ хупасса курмастăн:
Таҫти Европăра е Азире...
Пĕр-пĕр палла эп тивĕҫлĕ пулсассăн —
Чăваш сăмахĕ пултăр ман ҫире.



* * *

Во многих странах подаю я голос.
Бывает, и по-русски лажу стих,
Но только ветер с Волги тронет волос,
Кладу листы в сторонку: не до них.

Когда влетает этот ветер в душу,
То прочь уходит надолго покой,
Становишься вдруг замкнутее, суше
И сам не свой ты ходишь день-деньской.

Ты споришь с ним, а он поет трубою,
То нежно, то надрывно он поет.
В страданиях, в исканьях пред тобою
Чувашская история встает.

И думаешь: «Должник ты неоплатный
Пред прошлым и пред будущим... Не стой!»
И по стране ты мчишься необъятной
С единственною спутницей — мечтой:

Поднять родной народ еще немного —
Пусть знает мир, как можем мы дерзать;
Язык наш вынес трудную дорогу
И он о многом может рассказать.

Последний миг настигнуть может всюду —
В лесах, в степи — Отчизна велика...
Коль надписи я удостоен буду,
Пусть на чувашском будет та строка.